Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

*40 (7782) №* ✻ *Юн кун, 2010 ҫулхи ҫу (май) уйăхĕн 26-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Ыран – Пĕтĕм Раҫҫейри библиотекăсен кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ ТАТА ВУЛАКАНСЕМ!**

Сире Пĕтĕм Раҫҫейри библиотекăсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Халăхăн тавракурăмне тата культурине аталантарас, ҫитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕҫре библиотекăсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кĕнеке нумай вулакан, нумай пĕлекен ҫын кирек епле ыйту ҫине те хуравсем, йывăрлăхран тухмалли ҫулйĕре тупать. Ҫакна ачасемпе ҫитĕннисем чун-чĕрепе туйса илчĕр, вĕсем кĕнеке енне туртăнччăр тесе эсир хăвăртан килнине йăлтах тăватăр.

Халăха кирлĕ информаци парса тăрасси те библиотекарьсен пултарулăхĕпе ҫыхăннă. Ҫĕнĕ ĕмĕрти ҫĕнĕ технологие алла илни халăхăн тĕрлĕ сийне тĕрлĕ пулăшу пама майсем туса пачĕ. Халĕ библиотекăсенче видеосистемăсем, видеомагнитофонсем, компьютерсем паянхи кун ыйтнине тивĕҫтереҫҫĕ. Кунта кирек хăҫан та Интернета тухма пулать.

Сире малашнехи ĕҫĕрте ăнăҫу сунатăп. Библиотекăсемпе вулакансем хушшинчи ҫыхăну малалла татах та ҫирĕплентĕр. Сире пурне те ҫирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-ҫул сунатăп.

**Ю. ИВАНОВ, район пуҫлăхĕ.**

## Ялти библиотекарь

***Тойкилтĕ ялĕнче ҫуралнă Майя Николаева ачаранах библиотекарь пулма ĕмĕтленнĕ. Ашшĕ учительте ĕҫленĕ май кĕнеке вулама юратнă. Хаҫат-журнал та вăл ялта пуринчен нумай ҫырăнса илнĕ. Ҫапла Майя пĕчĕкренех кĕнекепе туслашнă.***

***Шкултан вĕренсе тухсан вăл Ҫĕрпӳри культурăпа ҫут ĕҫ училищинче пĕлӳ пухать. Хыҫҫăн Ҫатракасси ял библиотекинче ҫулталăка яхăн ĕҫлет. Унтан тăван тăрăха чун туртнăран Тойкилтĕри библиотекăна куҫса килет. Ҫавăнтанпа Майя Анатольевна кунти библиотекăра вăй хурать. Вăл вырăнти шкулпа та, Хорнуй ял тăрăхĕпе те тачă ҫыхăнса ĕҫлет.***

***– Ун патĕнчен ача-пăча таталмасть, – каласа парать ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ В.А. Любимова, – пире те кулленхи ĕҫре пулăшса пырать.***

***М.А. Николаева район хаҫачĕпе те туслă. Вырăнти хисепе тивĕҫлĕ ҫынсем ҫинчен ҫырнă материалсем***



***«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫатра тăтăшах кун ҫути кураҫҫĕ.***

***Вун ҫичĕ ҫул вăй хурать Майя Анатольевна хай суйласа илнĕ профессипе. Ачапа ача пек, ватăпа ватă пек пулма пĕлнĕрен ун патне ял ҫыннисем пырсах тăраҫҫĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкре: М.А. Николаева.***

**Республикăра**

## Коммуналлă пулăшу ĕҫне лайăхлатма

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров «Патшалăхпа уйрăм ҫынсен ĕҫтешлĕхне аталантармалли тата Чăваш Республикинче тарифсене йĕркелемелли тытăма лайăхлатмалли мерăсем ҫинчен» Указа алă пуснă. Вăл халăха паха коммуналлă тата социаллă пулăшу ĕҫĕсемпе усă курма пулăшмалла.

Указа пурнăҫлани федерацин, уйрăм ҫынсен инвестицийĕсене 2 миллиард тенкĕ таран илсе килме, республика бюджечĕ ҫине лекекен тăкаксене 2-4 хут пĕчĕклетме, регионăн пĕтĕмĕшле продукчĕ валли каякан энерги калăпăшне 3-5 процент пĕчĕклетме май парать.

**Паян – Предпринимательсен кунĕ**

## Малашлăхпа пурăнаҫҫĕ вĕсем

***Йывăрлăхсем хамăр вĕсене парăнтарма пултарайманнипе тата ҫавна валли мехел ҫитерейменнипе ҫураласҫĕ. Вĕсемпе кĕрешекенсем вара яланах ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă, пур, пулĕҫ те. Паян Раҫҫейри предпринимательсен кунне уявлатпăр. Ҫавна май хамăр тĕпеле район администрацийĕн экономика пайĕн пуҫлăхне Э. СИМАКОВĂНА чĕнтĕмĕр.***

**– Эльвира Иосифовна, предпринимательсем пирки каласнă чух ҫак «цехра» районта миҫе ҫын ĕҫленине пĕлес килет.**

– Кунашкал ыйтăва час-часах ыйтнăран тата вĕсен ĕҫне хамăр енчен контроллесех тăнăран хуравĕ те хатĕр. Муркаш районĕнче паянхи куна статистика кăтартăвĕсемпе 878 уйрăм предприниматель. Вĕсемпе пĕрлех пĕчĕк тата вăтам бизнесра вăй хуракан предприятисем 113, хресчен (фермер) хуҫалăхĕсем 67, ял хуҫалăх потребитель кооперативĕсем 16. Харпăрлăхăн ҫак тĕрлĕ формисенче ĕҫлекенсем пĕтĕмпе 2300 ҫын. Ку вăл район экономикинче вăй хуракансен 18 проценчĕ пулать. Вĕсене аталантарма районта «2007-2011 ҫулсенче пĕчĕк хуҫалăх формисене аталантарасси» программа ĕҫлет. Ҫакна валли пăхнă 5 ҫуллăх финанс калăпăшĕ 156 миллион тенкĕ. Вăл шутра район бюджетĕнчен пăхнă укҫатенкĕ 15,220 миллион тенкĕ.

**– Предпринимательствăна пулăшни ырă пулăм. Вĕсен ĕҫ калăпăшĕ вара мĕнлерех?**

– Кăҫалхи пĕрремĕш кварталта кăна пĕчĕк хуҫалăх формиллĕ субъектсем 40,9 миллион тенкĕлĕх тавар туса кăларнă. Ку вăл пĕтĕмĕшле хисепĕн 24 проценчĕпе танлашать. Вĕсенчи уйăхри вăтам ĕҫ укҫи 7100-7500 тенкĕпе танлашать.

**(Вĕҫĕ 3-мĕш стр.).**

**Йыхрав**

## Районти Акатуй – июнĕн 5-мĕшĕнче

Район администрацийĕн пуҫлăхĕн йышăнăвĕпе ҫурхи ака-суха ĕҫĕсене вĕҫленĕ май Аслă Ҫĕнтерӳ тунăранпа 65 ҫул тултарнине тата Чăваш автономине йĕркеленĕренпе 90 ҫул ҫитнине халалласа районти Акатуй уявне июнĕн 5-мĕшĕнче ирттерме палăртнă.

Акатуя хатĕрленсе ирттерме ятарлă комисси йĕркеленĕ, тумалли ĕҫсен планне ҫирĕплетнĕ.

Уяв Лантăш вăрманĕн уҫланкинче 10 сехетре пуҫланать. Малтан ĕҫре маттуррисене чыслаҫҫĕ. Программăра – юрă-кĕвĕ, тĕрлĕ вăйăсем, спорт ăмăртăвĕсем. Ал ĕҫ ăстисем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарĕҫ. Апатланупа суту-илӳ предприятийĕсем тутлă апат-ҫимĕҫ сĕнĕҫ.

Районти Акатуйччен вырăнсенче ҫакăн йышши уявсем ирттерме сĕннĕ.

**Вĕрентӳ**

## Ыран – экзамен

***Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем пуҫланиччен вăхăт питĕ сахал юлчĕ. 11 класран вĕренсе тухакансем пĕрремĕш экзамена ыран тытĕҫ. Ăҫта ирттерме палăртнă-ха пирĕн районта обязательнăй майпа иртекен экзаменсене? Ыттисене ăҫта тытмалла? Ҫак ыйтусем ҫине район администрацийĕн вĕрентӳ, ҫамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ А. ЛЕСКИНА хуравларĕ:***

– Пĕрремĕш тапхăрпа иртекен пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене ҫапла йĕркепе тытмалла пулать. Майăн 27-мĕшĕнче 11 класран вĕренсе тухакансем информатикăпа ИКТ предмечĕпе (районтан 7 выпускник), биологипе (65) тата литературăпа (4) пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене Етĕрне хулинчи 3 № вăтам шкулта тытĕҫ. Майăн 31-мĕшĕнче пур выпускник та (малтанхи ҫулсенче шкултан вĕренсе тухнисемпе пĕрле пурĕ 294 ҫын) вырăс чĕлхипе экзамен тытать. Вĕсем Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенче иртеҫҫĕ. Июнĕн 4-мĕшĕнче экзаменсем химипе (33 вĕренекен), акăлчан (5) тата нимĕҫ (2) чĕлхисемпе Шупашкар хулинчи 10 № вăтам шкулта (чĕлхесемпе) тата Шупашкарти 4№ гимназире (химипе) иртеҫҫĕ. Математикăпа экзамен июнĕн 7-мĕшĕнче пулать. Ку экзамен Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсенче иртет. Экзамен тытакансем малтанхи ҫулсенче шкул пĕтернисемпе пĕрле пурĕ 289-ăн. Июнĕн 11-мĕшĕнче физика (70) тата истори (37) предмечĕсемпе пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене суйласа илнисем Етĕрне хулинчи 3 № вăтам шкула ҫитĕҫ. Кунсăр пуҫне географи (9) тата обществознани (105) предмечĕсене суйласа илнисем те кăҫал ҫак предметсемпе пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене Муркашри вăтам шкултах тытĕҫ. Вĕсен экзамен кунĕ – июнĕн 15-мĕшĕ.

Экзаменсене шута илмелли сăлтавсене пула асăннă кунсенче тытайманнисем валли резерв кунĕсене ҫирĕплетнĕ: июнĕн 17,18, 19 тата 21-мĕшĕсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Тĕнче чемпионатĕнче**

## Тăваттăмĕш пулнă

Хăвăрт утассипе Мексикăра (Чиуауа) иртнĕ Тĕнче чемпионатĕнче Вера Соколова тăваттăмĕш вырăна тухнă. Ҫĕршывăн пĕрлештернĕ командинче лидерсем пулман пулин те ҫамрăксем хăйсене лайăх енчен кăтартнине палăртаҫҫĕ.

Вера 20 километра утса кăшт ҫеҫ «бронза» ҫĕнсе илеймен, вăл Португали спортсменкине 26 ҫеккунт выляса янă.

Ҫапла вара пирĕн ентешĕн Барселонăра иртекен Европа чемпионатне хутшăнас шанчăк пур.

Верăна ăнăҫусем сунатпăр.

**Юлашки шăнкăрав**



## Умра – аслă пурнăҫ ҫулĕ

***Ĕнер 11-мĕш класран вĕренсе тухакан 287 яшпа хĕршĕн, 9-мĕш класс пĕтерекен 415 ачашăн юлашки шăнкăрав янăрарĕ.***

***Шкулта иртнĕ вун пĕр ҫул хыҫра ĕнтĕ. Умра – аслă пурнăҫ ҫулĕ. Йывăрлăхсене ҫĕнтересси малашне ҫамрăксенчен хăйсенчен килет. Вĕсене шкулта илнĕ пĕлӳ, учительсемпе ашшĕ-амăшĕн ырă канашĕ пысăк пурнăҫ ҫулĕ ҫинче пулăшса пырасса шанатпăр.***

***Ăнăҫу та телей сире, ҫĕр-шывăн пулас хуҫисем!***

***Сăн ӳкерчĕкре: Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухакан арҫын ачасен пĕр ушкăнĕ.***

**Саламлатпăр**

Ырă кăмăллă та илемлĕ хĕрарăма – Кĕҫĕн Чураш ялĕнче пурăнакан **Лидия Никоновнăна** ҫуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр.

Вăл нумай ҫул хушши ĕнтĕ Турайри больницăра медсестрара тăрăшать. Пире пур вăхăтра та пулăшса тăнăшăн сана пĕтĕм кăмăлтан тав тăватпăр, пурнăҫра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Ҫирĕп сывлăхлă та телейлĕ пул.

**Саламлаканĕсем: Раҫҫейĕн хисеплĕ донорĕ Сусанна Пинчук тата Антонина Петровна. Кĕҫĕн Чураш ялĕ.**

**Ҫырăнтару – 2010**

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2010 ҫулхи иккĕмĕш ҫур ҫулта илсе тăма унчченхи хакпах ҫырăнтараҫҫĕ. Ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Яланах пĕрле пулар!**

**Райхаҫат редакцийĕ.**

## Приглашает общественная приемная

**С апреля 2010 года начала свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия».**

**9-14.**